# ҪӐВАШ ЙУРРИНЕ ФОНОКРАФПА ҪЫРҪӖҪ.

Халӑх йуррине ҫырас ӗҫре фонокраф*) пит пысӑк усӑ парать—йурланӑ кӗвӗ тӗп-тӗрӗс валик ҫине ӳкет, йурланин пур кукри-макрисем ҫухалмасӑр йулаççӗ. Йурра хут ҫине ӳкэрес тесен, фонокрафа темиҫе хут калаттарса тӗрӗс ҫирма май пур, ҫырнине тӗрӗслеме те ҫӑмӑл—йурӑ йурлакан ҫынна шыраса ҫӳремелле мар, вӑл урӑхларах йурласа парасран та пӑшӑрханмалли ҫук—валик ҫине ӳкнӗ йурӑ хуть пин хут калаттарсан та пӗр пекех илтӗнет. Кӗскен каласан—фонокраф халӑх йуррине тӗп-тӗрӗс, ҫӗп-ҫӗрӗ сыхласа хӑварать, валиксене сыхласан ҫав йурра темиҫе ҫӗр ҫул иртсен те итлеме май пур.

Ку таранҫен ҫӑваш йуррине хут ҫине ҫырнӑ ӗҫре фонокрафпа усӑ курайман. Ҫӑваш ҫӗршывне сӑнама тӑрӑшакан ушкӑнӑн мусӑк ҫексийӗ фонокраф илме шутланӑҫҫӗ, анҫах ниҫтан та тупаймарӗ.

Пӗлтӗр Ленинкратра манпа Ленинкратри Конҫерваттоийӗн мусӑк етнокрафи ҫексийӗн претҫеттаттӗлӗ Н. Н. Ҫеркейӗв паллашрӗ. Вӑл, „сирӗн Республӗкре халӑх йуррине пуҫтарас ӗҫ аван пырать“ тесе, пирӗнпе ҫыхӑну тытас шухӑш пурри не kаларӗ. Вӑл каланӑ тӑрӑх, вӗсен ҫексийӗ тӗрлӗ ҫӗре фонокрафпа йурӑ ҫырма экспетитсисем йарать.

Епӗ Ҫеркейӗва ун ҫухнех Ҫӑваш Республӗкне пыма ҫӗнтӗм, анҫах вӗсем пӗлтӗр Алтайа кайнипе пирӗн пата килеймерӗҫ Вара ҫакӑн пирки вӑл ӗҫ кӑҫал ҫуркуннене йулҫӗ. Ҫӑваш ҫӗршывне сӑнама тӑрӑшакан ушкӑн ҫӗннипе, Ленинкратри Конҫерватторийӗн мусӑк ҫексийӗ Шупашкара фонокрафпа Конҫерватторинҫе вӗренекен В. К. Томилина йаҫӗ.



Йалти хресҫен Каврил Фетӑрӑв фонокраф умӗнҫе йурлать.

В. К. Томилин Шупашкарта 6-мӗш апрелте килсе 10 кун пурӑнса карӗ. Ӑна Мусӑк Технӗккӑмӗнҫе пӗр пӳлем йурӑ ҫырмалли капинет тума патамӑр, йалтан Каврил Фетӑрӑва ҫӗнтӗмӗр. Тӗрлӗ инструментсемпе



Ҫӑваш хорӗнҫен—Алексейӗв К. йурлать.

калакан мусӑка (шӑпӑр, сӑрнай, кӗсле каланине) ҫырас тесе йалтан шӑпӑрҫа, сӑрнай, кӗсле калаканӗсене ҫӗннӗҫҫӗ, анҫах сул ҫуккипе вӗсем килеймерӗҫ.

Томилин фонокрафпа пӗрле 30 валик илсе килнӗ. Ҫав 30 валик ҫине вӑл 10 кун хушшинҫе 100 йурра йахӑн ӳкерҫӗ. Йурӑ йурлакансем, Каврил Фетӑрӑвсӑр пуҫне, ҫаксем пулҫӗҫ: капеллӑра йурлакансем—Кеорки Алексейӗв, Трофимӑвӑ, Никиттӗнӑ, Мусӑк Технӗккӑмӑнҫе вӗренекенсем—Петрова, Петров, Поппова, Шумилӑв. Пуринҫен ытла Каврил Фетӑрӑв йурласа панӑ йурӑсене ҫырҫӗҫ.

Йурӑсем, пӗтӗмӗшпе илсен, аван ӳкнӗ—усӑ илтӗнеççӗ. Ҫырнӑ йурӑсене Томилин икӗ тапхӑр калаттарса паҫӗ, пӗрре вӗренекенсен пуххинҫе, тепре Ҫӑваш Ҫӗршывне сӑнакан ушкӑнӑн пуххинҫе. Вӗренекенсен пуххинҫе Томилин фонокрафпа мӗнле йурӑ ҫырмалли ҫинҫен токлат туса паҫӗ, ун ҫухнех вӗренекенсем умӗнҫе вӗренекенсенҫен пӗр 5—6 йурӑ ҫырса кӑтартрӗ.

Йурӑ ҫырнӑ ҫухне йурӑсен сӑввине ҫырма Томилина пулӑшакансем пулҫӗҫ: Технӗккӑмра вӗрентекен Т. П. Парамонӑв, вӗренекенсем Луккин, Миххайлӑв, тата ыттисем те.

Ҫапла иртрӗ ҫӑваш йуррисене фонокраф ҫине пуҫласа ӳкерес ӗҫ. Малашне ку ӗҫе татах вӑйлӑлатмалла, фонокраф илсе килсе йурӑсене ҫырнӑ ҫӗрте никҫанах ҫапла ӗҫлемелле—вара ҫӑваш йуррин илемлӗхӗ, унӑн характӗрӗ улшӑнмасӑр хут ҫине ӳкме пулгарать, йурӑ пуҫтарас ӗҫ кустарҫӑй сул ҫинҫен наукӑ кӑтартнӑ сул ҫине куҫать.

**Ҫ. Макҫимӑв.**

*) Фонокраф вӑл каланине, йурланине валик ҫине ӳкермелли кӑрмафон йеверлӗ инструмӗнт.